78-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
31
ЭРНЕКУН
168(6919) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Ялти пуçламĕш парторганизацисен тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçри задачисем

Колхозсем тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсен чи хĕрӳллĕ тапхăрне кĕчĕç. Тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана вăхăтра тата пĕтĕмпех тултарасси—пĕтĕм халăхăн чи малтан тумалли ĕçĕ. Ялти пуçламĕш парторганизацисемшĕн, мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсемшĕн хальхи вăхăтра тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсенчен пахараххи урăх çук та.

Колхозсене, совхозсене тата МТС-сене ертсе пырас ĕçре партин пуçламĕш организацийĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пĕрлешӳллĕ ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçре парторганизацисем ответлă пулса тăнине Сталин юлташ темиçе хут та асăрхаттарнă.

«... Чăннипе илсен, хуçалăхăн пуçпулса тăракан форми патне — коллективлă хуçалăх патне куçни эпир ялхуçалăхĕшĕн тăрăшмаллине сахаллатмасть, пушшех те пысăклатать, ялхуçалăхне хăпартас ĕçре коммунистсен ертсе пырас рольне пĕчĕклеимест, пушшех те пысăклатать» (Сталин).

Колхозри пуçламĕш парторганизаци колхозăн хуçалăхпа политика пурнăçĕшĕн пĕтĕмĕшпех ответлă пулса тăрать. Çакă вара парторганизацисене колхозăн мĕнпур ĕçĕнче активлă хутшăнса ĕçлеме, унăн экономикине тĕплĕн пĕлме тата колхоз производствин пур участокĕсене те яланах витĕр курса тăма хушать. Паллах, çак мĕнпур ĕçсене тăвас пулсан, парторганизацисен хăйсен организациллĕ тата политикăллă ĕçĕсене чи çӳллĕ вырăна лартмалла. Çак ĕçсене ăнăçлăн туса пырасси массăпа мĕнле çыхăнса тăнинчен килет.

Колхозри пуçламĕш организацисен çакăн пек йĕрке тăвас пулать: ĕçлеме пултаракан пĕр колхозник та тырпул пухса кĕртес ĕçрен пăрăнса ан юлтăр, бригадăсенче ĕç кал-кал пулса пытăр.

Пуçламĕш парторганизацисен колхозсене государство умĕнчи обязательствăсене хăвăрт тата пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пыма май туса парас пулать. Ку тĕлĕшпе государствăна тата колхоза хирĕç пыракан шухăш-кăмăлсене çийĕнчех сирсе ямалла.

Пуçламĕш парторганизацин колхоз активĕпе таччăн çыхăнса ĕçлемелле. Активăн йышне ӳстерсе пырса, вĕсене пур ĕçе те явăçтармалла. Анчах та актив вăл унпа тăтăшах ĕçлесен кăна ӳссе пынине те манма юрамасть. Ялти коммунистсен, колхозниксен анлă массине ертсе пырас тесе, социализмлă ăмăрту пуçарса ямалла, дисциплинăна çирĕп пăхăнса тăрса, уйхир бригадисенчи, выльăх-чĕрлĕх фермисенчи тата ытти çĕрти паха ĕç опычĕсене ыттисене парса пымалла. Коммунистсен хăйсен авторитетне колхоз производствишĕн чĕререн суннипе, колхозра вăй шеллемесĕр ĕçленипе ӳстерсе пырас пулать.

Колхозсене ертсе пырас тĕлĕшпе хăйсен задачисене тĕрĕс ăнланса илнĕ тата организациллĕ-политикăллă ĕçсене тивĕçлипе туса пыракан парторганизацисем колхозри хуçалăхпа политикăллă ĕçсенче те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

Акă, Анаткас Хапăсри (Вăрнар районĕ) колхозри пуçламĕш парторганизаци 5 коммунистран тăрать. Парторганизаци тăрăшнипе колхоз тырпул пухса кĕртме лайăх хатĕрленнĕ пирки ыраш вырма ытти колхозсенчен маларах тухнă. Ыраша 4 кун хушшинче вырса пĕтерчĕ. Кунта ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнă тата партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Тырпул пухса кĕртес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас ыйтусене парторганизаци тăтăшах парти пухăвĕсенче сӳтсе-явать, бригадăсенче стена хаçачĕсем вăхăтра тухса тăраççĕ.

Пĕчĕк Кĕçтемĕрти (Сĕрпӳ районĕ) партин территориллĕ пуçламĕш организацийĕнче 14 коммунист тăрать, вĕсенчен 12-шĕ вăрçă вăхăтĕнче парти ретне кĕнĕ. Парторганизаци секретарĕ З. Титова колхозниксем хушшинче агитмассăллă ĕçе тивĕçлипе йĕркеленĕ, ку ĕçе пур коммунистсене те активлăн хутшăнтарса пырать. Парторганизаци юлса пыракан колхозсене те пысăк пулăшу парать. «Канаш» тата «Путь Ленина» колхозсем иртнĕ çулсенче кая юлса пынă пулсан, Пĕчĕк Кĕçтемĕрти территориллĕ парторганизаци пулăшнипе пула кăçал ку колхозсем ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те ытти колхозсемпе пĕртанах туса пыма тытăнчĕç.

«Маяк» колхозри (Чкаловски район) пуçламĕш парторганизаци те хăйĕн задачисене тĕрĕс ăнланса илнĕ. Колхоз çуракки ĕçĕсене 7 кун хушшинче туса пĕтернĕ. Ыраш вырас ĕçе те кĕске вăхăтра вĕçленĕ. Кунта колхозри пур ĕçсене те коммунистсем ертсе пыраççĕ. Парторганизаци политикăллă воспитани ĕçне анлăн туса пырать.

Паллах, парти райкомĕсем пуçламĕш парторганизацисене пулăшу парса ертсе пырсан, вĕсене парти ĕçĕсене туса пыма çул кăтартса пырсан, ытти парторганизацисем те çаксем пекех лайăх ĕçлеме пултараççĕ.

Улатăр районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацире 3 член, 5 кандидат тăрать. Кунта коммунистсем колхоз пурнăçĕпе сахал интересленеççĕ. Колхоз тырпул пухса кĕртме тивĕçлипе хатĕрленмен. Агитаторсем уйхирте политмассăллă ĕçе туса пымаççĕ. Колхоз ыраш вырма та кая юлса тухнă. Коммунистсем ĕçре хăйсен паха примерне кăтартса пымаççĕ. Коммунистсенчен 4-шĕ колхозри штатлă ĕçсенче ĕçлеççĕ, тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте колхозниксемпе пĕрле пĕр коммунист та ĕçлемест. Парти пухăвĕсем сайра-хутра кăна пулса иртеççĕ. Парторганизаци колхозри комсомол организацине ертсе пымасть.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсенчен чылайĕшне ĕçре пулăшу парса пымалла, анчах парти райкомĕсем кун çинчен час-часах манса каяççĕ. Акă, Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ хăйĕн обязанноçĕсене пĕлмест, колхоз производствипе сахал интересленет, партипе совет органĕсен решенийĕсемпе постановленийĕсене те пĕлмест. Парторганизаци парти пухăвĕн решенийĕсем пурнăçа кĕнине тĕрĕслесе тăмасть, колхоз активĕпе çителĕксĕр ĕçлет. Парторганизацири 8 коммунистран 2-шĕ кăна колхозник.

Парти райкомĕсемпе мĕнпур парти, комсомол организацийĕсем умĕнче хальхи вăхăтра, тырпул пухса кĕртнĕ хĕрӳ тапхăрта, ялти политикăллă ĕçе туса пырас тĕлĕшпе ответлă задачăсем тăраççĕ.

Масса хушшинчи организациллĕ тата политикăллă ĕçсене анлăн туса пыни тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене ăнăçлăн вĕçлеме пулăшать. Пропагандистсемпе агитаторсен, ялти коммунистсемпе комсомолецсен тырпул вăл хамăрăн Тăван çĕршывăн вăй-хăватне ӳстерме пулăшнине колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла, колхоз хресченĕсен ĕçри хастарлăхне ӳстерсе пырса, тырпул пухса кĕртес кампание вăхăтра тата пысăк пахалăхлă ирттерессишĕн тăрăшмалла.

Коммунистăн яланах ĕçе татса паракан участокра пулмалла. Чылай парторганизацисем çакна тĕрĕс шута илсе пыраççĕ. Анчах уйрăм парторганизацисем ку тĕлĕшпе тĕрĕс ĕçлемеççĕ, коммунистсене административлă ĕçсене кăна лартма тăрăшаççĕ, бригадăсемпе звеносенче вара коммунистсем пачах та пулмаççĕ. Ялти коммунистăн ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнипе пĕрлех, хăйĕн çемьине те хире илсе тухмалла.

Парторганизацин çывăх помощникĕ вăл—комсомол организацийĕ. Çавăнпа та кашни колхозрах комсомол организацийĕ туса ăна кулленех ертсе пымалла. Комсомолецсен пур тĕрлĕ пуçарăвне те сарма тăрăшмалла. Çакă ĕнтĕ çамрăксен вăйне татах та лайăхрах пĕтĕçтерме, вĕсен ĕçлес хастарлăхне ӳстерсе пыма май парать.

Колхозсенчи партиллĕ-политикăллă ĕç тивĕçлĕ вырăнта пултăр тесен, парти райкомĕсен колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисемпе ытларах ĕçлемелле. Парторганизацисене хисеп енчен те, пахалăх енчен те ӳстерсе пымалла, вĕсем колхозниксем хушшинче авторитетлă пулса, колхозсен производствăллă пурнăçне большевикла ертсе пыма пултарччăр.

Парторганизацисен ĕçри пултарулăхне хăпартас майсенчен пĕри вăл—парторганизаци ăшĕнчи ĕçсене лайăхлатнинче пулса тăрать. Парти пухăвĕсене вăхăтра ирттерес пулать. Парти решенийĕсем мĕнле пурнăçланса пынине тăтăшах тĕрĕслесе пымалла, пур коммунистсем те хăйсене панă поручениесене пурнăçласа пыччăр. Коммунистсене партипе государство дисциплинине çирĕппĕн пăхăнса тăма вĕрентмелле.

Кĕлте çыхнă çĕрте тунă пысăк çитĕнӳсем

Воронеж облаçĕнчи Никитовски районри Молотов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозница Мария Лихенцева, кĕлте çыхнă çĕрте ĕçлесе, çав тери паллă рекорд тунă. Вăл хăйпе пĕрле ĕçлекен Нина тата Мария Русановăсемпе пĕр кун хушшинче 9.060 кĕлте çыхнă. Çак звенора ĕçлекен София Прудская çыхнă кĕлтесене пĕр пĕчченех йăтса 151 купана купаласа лартнă. (ТАСС).

ЯЛТИ ШКУЛСЕНЧЕ ХĂÇАН ВĔРЕНТМЕ ПУÇЛАССИ ÇИНЧЕН

Вырăнти совет органĕсем ыйтнипе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ облаçсемпе крайсен исполкомĕсене тата республикăсен Совнаркомĕсене ялсенчи вăтам тата туллимар вăтам шкулсен 5—9-мĕш классенче 1945 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлама ирĕк панă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 28-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче японецсен 39 пин салтакĕпе офицерĕ тата 28 генералĕ пирĕн çарсене тыткăна парăннă. Тыткăна парăннă генералсем хушшинче Квантунри çарăн 30-мĕш армийĕн командующийĕ генерал-лейтенант Ида пур.

Августăн 9-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕш не çитиччен пирĕн çарсем мĕн пурĕ японецсен 513 пин салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем шутĕнче 81 генерал пур.

Çав вăхăт хушшинче пирĕн çарсем çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—587, танксем—347, тĕрлĕ тупăсем (вăл шута хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем те кĕреççĕ)—955, минометсем—711, пулеметсем — 3.355, винтовкăсем — 200.000 ытла, радиостанцисем—111, автомашинăсем—1.789, тракторсемпе тягачсем—118, лашасем — 9.708, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—725.

Япони çарĕсен парăнакан чаçĕсемпе соединенийĕсене йышăнасси малалла пырать.

СОВИНФОРМБЮРО.

АВГУСТĂН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Инçетри Хĕвелтухăçĕнче паллă улшăнусем пулман.

Августăн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсене Японин 9.000 салтакĕпе офицерĕ тата 2 генералĕ тыткăна парăннă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Стахановла юхăм пуçланни вунă çул тултарчĕ

ВЦСПС Председателĕпе В. В. Кузнецов юлташпа калаçни

1935 çулхи августăн 31-мĕшĕнче Донбасри Кадиевка районĕнчи «Центральная Ирмино» ятлă шахтăра пĕр ĕç пулса иртнĕ, ун çинчен вара часах пĕтĕм çĕршыв пĕлнĕ. Забойщик Алексей Стаханов çав кун, кăтмалли мăлатукпа ĕçлесе, 102 тонна çĕркăмрăкĕ катса кăларнă. Çавăнтанпа 10 çул иртрĕ. Анчах çав чаплă куна нихăçан та манас çук: августăн 31-мĕшĕнче пĕтĕм халăхăн стахановла юхăмĕ пуçланса кайрĕ, çав юхăм вара халăх хуçалăхĕн производство планĕсене пĕтĕмпех тата иртерсе тултарасшĕн кĕрешес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнчĕ.

Стахановла юхăм промышленность отраслĕсенче çĕнĕ те пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн ăмăртас ĕçе пуçласа ячĕ. Алексей Стаханов хыççăн машинист Кривонос, тимĕрçĕ Бусыгин, ткачихăсем Евдокия Виноградовăпа Мария Виноградова, сахăр кăшманĕ ӳстерекен бригадăн звеньевойĕ Мария Демченко тата ыттисем те питĕ чаплă çитĕнӳсем турĕç. Рабочисем техникăна вĕренес ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Предприятисенче ĕçĕн стахановла меслечĕсене вĕрентекен шкулсем уçăлчĕç, технологи процесне, инструментсене, тĕрлĕ хатĕрсене лайăхлатма тăрăшакан темиçе пин рационализаторпа изобретательсем ĕçлеме пуçларĕç. 1935-мĕшпе 1936-мĕш çулсенче пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче производствăра ĕçлеме пăрахмасăр 11,5 миллион çын, 1937 çулта (пĕр çул хушшинче)—9,5 миллион çын вĕреннĕ.

Социализмлă ăмăртупа унăн чи лайăх форми—стахановла юхăм — рабочисемпе инженерсен тата техниксен пултарулăхĕн çĕнĕ формисене пуçарса ячĕ. Нумай станокпа ĕçлесси, темиçе профессипе ĕçлесси, машинăсен проекчĕсене часрах туса машинăсене хăвăртрах хута ямалли майсемшĕн тăрăшасси пуçланса кайрĕç.

Пĕтĕм Союзри стахановецсен пĕрремĕш канашлăвĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ: «Паян стахановецсем сахал-ха, анчах та вĕсем ыран вунă хут ытларах пуласси пирки кам иккĕленме пултарĕ?» Чăнах та, 1940 çул пуçланнă тĕле стахановецсем транспортра рабочисен пилĕк пайĕнчен икĕ пайĕ чухлĕ, промышленноçра—виççĕмĕш пайĕ чухлĕ, строительствăра—тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ пулчĕç. Промышленноçпа транспортра стахановецсен хисепĕ 3 миллион çуррăран та иртрĕ. Кашни рабочипе специалист çĕнĕ техникăна вĕренсе алла илме тăрăшать, лайăх ĕçлесе, стахановец тенĕ чаплă ята илме тивĕçлĕ пулма тăрăшать.

Отечественнăй аслă вăрçă тылăн пĕтĕм пурнăçне, совет çыннисен пĕтĕм ĕçне пĕр задачăна—хамăр Тăван çĕршыва фашистла нимĕç захватчикĕсенчен сыхлас задачăна пăхăнтарчĕ. Пирĕн рабочи класс, служащисем тата интеллигенци çав тери организованнă та таччăн пĕрлешсе ĕçлерĕç, калама çук пысăк патриотизмпа, хамăрăн Тăван çĕршыва, большевиксен партине, аслă Сталина чунтан-чĕререн парăнса ĕçлерĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем ĕç тухăçлăхне тăтăшах хăпартса пычĕç, фронт валли продукци ытларах та ытларах кăларса пычĕç. Заводсенче двухсотниксен юхăмĕ пуçланса кайрĕ, çынсем хăйсемшĕн те, фронта кайнă юлташĕсемшĕн те ĕçлеме пуçларĕç. Уралти фрезеровщика Дмитрий Босоя пурте тивĕçлипе мухтаççĕ, хисеплеççĕ. 1942 çулхи февральте вăл, темиçе операцие пĕрлештерсе, хăйĕн нормине 1480 процент тултарнă!

Çапла вара двухсотниксен юхăмĕнчен тысячниксен юхăмĕ пуçланса кайрĕ.

Сталин юлташăн 1942 çулхи майăн 1-мĕшĕнчи приказне ответлесе, Кузнецкри Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн коллективĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур металлургсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва пуçласа яма чĕнчĕ. Çав металлургсем чĕннине пирĕн çĕршывăн мĕнпур кĕтессисенче ырларĕç. Часах çав ăмăртăва промышленноçăн, транспортăн тата ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенчи рабочисем хутшăнчĕç.

ВЦСПС па Халăх Ком[illegible] промышленность, ялхуçалăх тата транспорт наркомачĕсемпе главнăй управленийĕсем тăрăх, мĕн пурĕ 50 наркоматпа управлени тăрăх социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăха-пăха тухаççĕ.

Продукци ытларах туса кăларас, ĕç вăйне перекетлес тата оборудованипе тĕрĕс усă курас ĕçре çамрăксен бригадисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсене Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче организациленĕ. Çĕркăмрăк промышленноçĕнче çав бригадăсен хисепĕ 1944 çулта кăна виçĕ хут ӳссе кайнă, боеприпас промышленноçĕнче вĕсен хисепĕ 10 пине çитнĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче кадрсене вĕрентес ĕç анлăн сарăлчĕ. Профсоюз организацийĕсем стахановла шкулсем нумай уçрĕç. 1944 çулта Хĕвелтухăçĕнчи металлурги заводĕсенче çав шкулсенче 25 пин çынна вĕрентнĕ, пентрти чугун çулсем çинчи шкулсенче 44 пин çынна ытла вĕрентнĕ. Пĕр çул хушшинче 225 пин шахтерпа 160 пин текстильщик хăйсен квалификацине хăпартнă.

«Хисеппе мар, пĕлнипе». Çак лозунгпа ĕнтĕ Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче производствăна лайăхлатассишĕн, производство заданийĕсене сахалтарах рабочисемпех тултарассишĕн тата иртерсе тултарассишĕн тăрăшас юхăм пуçланса кайрĕ. Социализмлă ăмăртăвăн çак çĕнĕ формине Александр Шашков, Егор Агарков, Александр Федотов пуçласа ячĕç. Агарковăн ĕç меслечĕсем танк промышленноçĕнчи заводсенче ĕçе пĕр чакармасăр 115 вак цеха, 515 производство участокне тата 600 бригадăна ытла хупма май пачĕç. Çакна пула вара 6.087 çынна, çав шутра 2.297 инженерпа техника тата служащие, квалификациллĕ 3.790 рабочие, хăйсем ĕçлесе тăнă вырăнтан ытти участоксене куçарма май пулчĕ. Агарковăн ĕç меслечĕсемпе халĕ хĕçпăшал, хура металлурги, электричество промышленноçĕсенчи нумай заводсенче усă кураççĕ.

ВЦСПС-ăн XII-мĕш пленумĕ кашни профессинчи ăмăртăва анлăрах сарса яма тата ăмăртакансенчен чи тухăçлă ĕçлекеннисене хавхалантармалли майсемпе усă курма сĕнчĕ. Ăмăртура мала тухнисен ячĕсене «Хисеп хăмисем» çине тата «Хисеп кĕнекисене» çырса хуни, çавăн пек çынсене хисеплĕ грамотăсем пани стахановла юхăма тата анлăрах сарма пулăшаççĕ.

Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕн аслă çĕнтерĕвĕпе хавхаланса, совет металлургĕсем кăçал та, 1942 çулти пекех, Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнчĕç. Пирĕн çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне кĕчĕ. Халь пирĕн умра çакăн пек задача тăрать: вăрçă кӳнĕ сиенсене часрах сапламалла, тăшман килсе тапаннă пирки сиен курнă хуласемпе ялсене юсамалла, совет державин çарпа экономика хăватне малалла та ӳстерсе, çирĕплетсе пымалла.

Металлургсем чĕннине авиаципе автомобиль промышленноçĕнчи, машинăсем тăвакан промышленноçри, çĕркăмрăк шахтисенчи, нефть промыслисенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, çавăн пекех тата колхозниксемпе ялхуçалăхĕнчи работниксем ырласа хапăл турĕç.

Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту пирĕн çĕршыври мĕнпур предприятисемпе колхозсенче сарăлса кайрĕ.

Стахановла юхăм çак çулсенче пирĕн Тăван çĕршывăн хăватне ӳстермелли, йышлă массăсен пурнăçне лайăхлатмалли чаплă май пулчĕ, халĕ те çавăн пек май пулса тăрать.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, пирĕн халăх сталинла пилĕкçуллăх плансене пурнăçа кĕртрĕ, хăватлă индустри туса хучĕ, пирĕн çарпа экономика хăватне çирĕплетсе пычĕ, тылра хăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлесе, кураймалла тăшмана çĕнтерме май туса пачĕ. Ленин — Сталин партийĕ тавра таччăн пĕрлешсе, рабочи класпа интеллигенци пирĕн аслă социализмлă Тăван çĕршывăн хăвачĕпе чапне малалла ӳстермешкĕн ĕçре çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнӳсем туса пырĕç. (ТАСС).

Чи паллă вăрçă преступникĕсен ĕçĕсене тĕпчес тĕлĕшпе тата вĕсене айăплас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет пĕлтерни

Кăçалхи июнĕн 28-мĕшĕпе августăн 8-мĕшĕ хушшинче Лондонра Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин представителĕсем хушшинче Европăри тĕнĕл держависен чи паллă вăрçă преступникĕсене суд туса айăплас тĕлĕшпе калаçусем пулса иртни çинчен пирĕн хаçатсенче пĕлтерчĕç. Калаçусем хыççăн Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата Франци правительствисем чи паллă вăрçă преступникĕсем пирки Килĕшӳ тунă. Килĕшӳре чи паллă вăрçă преступникĕсен ĕçĕсене тĕпчес тата вĕсене айăплас тĕлĕшпе ĕçлеме Комитет организацилесси çинчен кăтартса панă тата Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналне туса хурасси çинчен каланă. Халĕ çав Комитет Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналăн судне памалли вăрçă преступникĕсен пĕрремĕш списокне туса хатĕрленĕ.

Аяларах чи паллă вăрçă преступникĕсен ĕçĕсене тĕпчес тĕлĕшпе тата вĕсене айăплас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет кăларнă пĕлтерĕвĕн текстне пичетлетпĕр:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата Çурçĕрти Ирландин Пĕрлешнĕ Королевствин Правительствисем тата Франци Республикин Вăхăтлăх Правительстви, 1945 çулхи августăн 18-мĕшĕнче тунă килĕшӳпе килĕштерсе, чи паллă вăрçă преступникĕсен ĕçĕсене тĕпчес тата вĕсене айăплас тĕлĕшпе ĕçлеме тунă Комитет вăрçă преступникĕсен пĕрремĕш списокне хатĕрленĕ. Çав преступниксене пурне те Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн судне параççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн судне памă хатĕрленĕ пĕрремĕш списока çаксем кĕреççĕ.

Герман Вильгельм Геринг, Рудольф Гесс, Иоахим фон Риббентроп, Роберт Лей, Альфред Розенберг, Ганс Франк, Эрнст Кальтенбруннер, Вильгельм Фрик, Юлий Штрейхер, Вильгельм Кейтель, Вальтер Функ, Гельмар Шахт, Густав Крупп фон Болен унд Гальбах, Эрих Редер, Карл Дэниц, Байдур фон Ширах, Фриц Заукель, Альберт Шпеер, Мартин Борман, Франц фон Папен, Альфред Иодль, Константин фон Нейрат, Артур Зейсс Инкварт, Ганс Фриче.

Пĕрремĕш списока кĕмен вăрçă преступникĕсен ĕçĕсене тĕпчесси малалла пырать».

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ÇАР ТРИБУНАЛĔН СУДНЕ ПАМАЛЛИ ЧИ ПАЛЛĂ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕН ПЕРРЕМĔШ СПИСОКНЕ КĔРТНĔ ÇЫНСЕМ ÇИНЧЕН КĔСКЕН КАЛАСА ПАНИ

Герман Геринг—рейхсмаршал, гитлерла Германин сывлăшри вăйĕсен главнокомандующийĕ, авиацин импери министрĕ, Гитлер влаçа тытса илнĕ хыççăн Рейхстаг председателĕ, гитлерла государствăн оборона совечĕн председателĕ, «Герман Геринг Верке» концернăн пуçлăхĕ пулнă. Гитлерла Германире Гитлер хыççăнхи пĕрремĕш çын.

Рудольф Гесс—национал-социалистсен партине ертсе пырас тĕлĕшпе Гитлерăн заместителĕ пулнă. Министр рангне илнĕ. Вăрçă пуçланнă хыççăн Гитлер хăй вилес-мĕн пулсан, хăй вырăнне лартма палăртнă çынсенчен пĕри пулнă. 1941 çулхи май уйăхĕнче Гесс, Гитлер хушнипе, Германирен Англие самолетпа вĕçсе каять те Англипе калаçусем пуçласа яма хăтланать. Ăна Англире ун чухнех тытса хунă.

Иоахим фон Риббентроп—гитлерла Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ тата Вăрттăн Совет членĕ пулнă. Гитлерла Германин вăрă-хурахла тулашри политикине ертсе тата хавхалантарса пыракансенчен пĕри пулнă.

Роберт Лей—«Германири ĕç фрончĕ» текен фашистла чи ирсĕр организацисенчен пĕрине, Гитлерăн вăрçă планĕсене пурнăçа кĕртме тунăскере ертсе пынă. Вăл Германири профсоюзсене пĕтерсе лартнă. Гитлерла партин чи паллă руководителĕсенчен пĕри. Гитлерăн çывăх помощникĕ.

Альфред Розенберг—«Оккупациленĕ Хĕвелтухăçĕнчи облаçсен импери министрĕ», гитлерла партин тĕп лидерĕсенчен пĕри пулнă, вăл çав партин тулашри политика отделне ертсе пынă. Фюрерăн национал-социалистсен партине «духовнăй тата идеологи тĕлĕшĕнчен воспитани парас» ыйтусем тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ пулнă. Гитлерăн доверенăй çынни, палач, нимĕçсен фашистла çарĕсем Балтика тинĕсĕ тавраш ĕнчи совет республикисене вăхăтлăха оккупациленĕ вăхăтра Гитлерăн халăха пĕтермелли программине чи тискеррĕн пурнăçа кĕртекенсенчен пĕри пулнă.

Ганс Франк — Германи оккупациленĕ Польшăра генерал-губернатор пулнă. Польша халăхне асаплантарнă палач. Майданекра, Освенцимра тата нимĕç фашисчĕсен ытти лагерĕсемпе тĕрмисенче çав тери тискер ĕçсене организацилекенĕ пулнă.

Эрнст Кальтенбруннер—Гестапо начальникĕн Гиммлерăн заместителĕ. СС çарĕсен, гитлерла полицин группенфюрерĕ. Гейдриха вĕлерне хыççăн Австрире тата Чехословакире çĕмĕрсе çӳренĕ. Кунта вăл чех патриочĕсене тискеррĕн асаплантарнă.

Вильгельм Фрик—Гитлер правительствин шалти ĕçсен министрĕ тата «Богемипе Моравин протекторĕ» пулнă. Чех халăхĕн юнне тăкнипе чапа тухнă вăтă сотрудниксенчен пĕри.

Юлий Штрейхер—гаулейтер (Гитлерăн Франконири наместникĕ) пулнă. Германире еврейсен погромне организацилекенĕ. Гитлерла партие тăвакансенчен пĕри.

Вильгельм Кейтель—генерал-фельдмаршал, гитлерла Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн штаб начальникĕ. Вăл Гитлер çумне чи малтан хутшăннă нимĕç генералĕсенчен пĕри пулнă, Гитлер ăна питĕ шаннă. Вăл Гитлерăн вăрă-хурахла вăрçă планĕсене пурнăçа кĕртессине ертсе пырас ĕçре уйрăмах палăрнă нимĕç генералĕсенчен пĕри пулнă.

Вальтер Функ—гитлерла Германин хуçалăх министрĕ, рейхсбанк президенчĕ, наци экономикин главнăй комиссарĕ, культура тĕлĕшпе ĕçлекен импери комитечĕн гитлерла вице-президенчĕ, нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывсене тискеррĕн çаратас ĕçе организацилекенĕ пулнă.

Гельмар Шахт—хуçалăх министрĕ пулнă. Гитлерла партин членĕ пулнă май, Гитлерăн вăрçă планĕсене пурнăçа кĕртме уйрăмах активлăн тăрăшнă. Çав плансене пурнăçа кĕртес тесе, Германин тата унăн сателисчĕсен халăх хуçалăхĕн финансне мобилизациленĕ.

Густав Крупп фон Болен унд Гольбах—Круппăн çар завочĕсен—Германири «тупă королĕн» пысăк хуçи. Германире фашизма аталантарас ĕçе активлăн хутшăннă, Гитлерăн вăрă-хурахла империалистла политикине пурнăçа кĕртме пулăшнă. Гитлерăн тусĕ, вăрçа хатĕрленес тата Гитлерăн вăрă-хурахла ушкăнĕсене хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе Гитлерăн çывăх помощникĕ пулнă.

Эрих Реддер—гросс-адмирал, Германин тинĕс-çар флочĕн главнокомандующийĕ, унтан имперăн тинĕс-çар флочĕн генерал-инспекторĕ пулнă. Гитлерăн çывăх помощникĕ тата Гитлер пуринчен ытларах шанса тăнă адмиралсенчен пĕри пулнă.

Карл Дэниц — гросс-адмирал. 1943 çултанпа—Германин тинĕс-çар флочĕн главнокомандующийĕ. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пуçласа янăшăн тата Германи флочĕ вăрă-хурахла ĕçсем тунăшăн пĕтĕмпех ответ тытать. Гитлер çухалнă хыççăн Германин государство пуçлăхĕ пулнă.

Байдур фон Ширах—«гитлерла çамрăксен» («Гитлерюгент») организацийĕн импери руководителĕ, гитлерла гаулейтер (Австрири наместник).

Фриц Заукель—гитлерла гаулейтер (Тюрингири наместник) тата ĕç вăйĕпе усă курас тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй уполномоченнăй. Бухенвальдри вилĕм лагерьне организацилекенĕ. Çав лагерьте хĕвелтухăç тата хĕвеланăç фрончĕсенче тыткăна илнĕ темиçе вунă пин çар çыннине асаплантарса вĕлернĕ.

Альберт Шпеер—Гитлерăн хĕçпăшал министрĕ, çар производствине активлăн организацилекенĕ. Тыткăна лекнĕ çар çыннисем тата нимĕçсем оккупациленĕ территорирен фашистла чуралăха хăваласа кайнă вуншар пин çын çар строительствинче пĕтнĕшĕн ответ тытать.

Мартин Борман — фашистла партие ертсе пырас тĕлĕшпе Гитлерăн сылтăм алли, Гитлерăн личнăй хуралĕн начальникĕ пулнă. Вăл Гитлерпа уйрăмах çывăх пулнă, Гитлер хăй те ăна питĕ шанса тăнă.

Франц фон Папен—Германин Турцири посолĕ, гитлерла чи паллăрах дипломатсенчен пĕри пулнă. Гитлерăн тулашри политикине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе паллă вырăн йышăнса тăнă. Германи империализмĕн вăрă-хурахла планĕсенчен пĕрне пурнăçа кĕртес тесе, пĕтĕм тĕнчери провокацисене организацилекенсенчен чи паллăраххи пулнă.

Альфред Иодль — генерал-полковник, гитлерла çарăн генеральнăй штабĕн начальникĕ, гитлерла «Вермахтăн» (çарăн) тĕп руководителĕсенчен тата хавхалантаракансенчен пĕри. Гитлерăн вăрă-хурахла вăрçă планĕсене туса пурнăçа кĕртнĕшĕн ответ тытать.

Константин фон Нейрат—Гитлерăн çывăх çыннисенчен пĕри, Гитлер правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ, каярахпа гитлерла «Вăрттăн Советăн» председателĕ, унтан 1939—1943 çулсенче «Богемипе Моравин протекторĕ» пулнă. Чех халăхне асаплантарнă палач.

Артур Зейсс Инкварт—Гитлерăн çывăх çынни. 1938 çулта Австрин шалти ĕçсен министрĕ пулнă май, Гитлера Австрие тытса илме пулăшнă, ăна вара Гитлер имперăн Венăри наместникĕ туса хунă. Каярахпа нимĕçсен фашистла çарĕсем оккупациленĕ Голландире Гитлерăн уйрăм уполномоченнăйĕ пулнă. Мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарнипе чапа тухнă.

Ганс Фриче—Геббельсăн пĕрремĕш заместителĕ, Берлинри политика тĕлĕшĕнчи главнăй радиокомментатор. Гитлерла пропаганда ĕçĕнче паллă вырăн йышăнса тăнă çын.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Графика тултарса пыраççĕ

ВАРНАР. (Хамăр корр.). Районри чылай колхозсем хăйсен малтанхи тивĕçне чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем государствăна тырă памалли графика иртерсе тултараççĕ. Акă, Иртемелкассинчи «Победа» колхоз (председателĕ коммунист Е. Зайцев) августăн 5-мĕшĕнче 31-мĕшĕ хушшинче график тăрăх 186 центнер тырă памалла пулсан, 187,81 центнер панă. Августăн 26-мĕшĕнче, воскресник туса, ку колхозран 44,45 центнер тырă леçсе панă. Утарти «Трактор» колхоз çав срокрах 190 центнер вырăнне 194,5 центнер леçсе панă.

Çавăн пекех Анаткас Хапăсри Чапаев ячĕпе тăракан, Хирпуçĕнчи «Победа» тата ытти колхозсем те графика тултарса пыраççĕ.

Анчах çаксемпе пĕрлех, хăшпĕр колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ-ха. Çавна пула район хăйĕн графикне тултараймасть.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе юлса пыракан колхозсен малта пыракан колхозсенчен пример илмелле, государствăна тырă парас ĕçре юлса пырассине пĕтермелле.

Е. ВОЛКОВ.

Скворцовпа Желтухин комбайнерсем хăйсен планĕсене тултарнă

Куславкка МТС-чи Желтухин комбайнер августăн 30-мĕшĕ тĕлне 124 гектар, Скворцов комбайнер 120 гектар тырă вырса пухнă, çапла вара вĕсем хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарнă. Антонов, Бардасов тата Терентьев комбайнерсем те кашниех çĕршер гектара яхăн вырнă. МТС комбайнерĕсем комбайнсемпе вырса пухмалли плана сентябрĕн 1-мĕшĕччен тултарма обязательство илнĕччĕ. Çак обязательствăна пурнăçласшăн вĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

МТС-ра сялкăсемпе ыраш акасси те ăнăçлă пырать. Гаврилов юлташ ертсе пыракан 1-мĕш трактор бригади планран ирттерсе 11 гектар акнă.

Яковлев тракторист 120 гектар акнă

Калинино МТС-чи 8-мĕш бригадăри тракторист Ф. Яковлев юлташ пĕр вăхăтрах сухаласа тата сӳресе 120 гектар акнă. Тракторист И. Сидоров паянхи куна 75 гектар акнă. Пĕтĕм МТС-пе пурĕ 400 гектар сухаласа акнă. МТС ыраш акмалли хăйĕн планне паян-ыран тултарать.

650 вăкăр ĕçре

ШĂМĂРШĂ, августăн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем тырпул пухса кĕртес ĕçре майракаллă шултăра выльăхсемпе туллин усă кураççĕ. Кĕлте турттарас, ыраш акас тата государствăна тырă леçес ĕçре кăна кӳлме вĕрентнĕ вăкăрсемпе тата ĕнесем 650 ытла ĕçлеççĕ. Вырăс Чукалĕнчи «Красный партизан», Шамкайри «Светлый путь» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче кашниннех 25—30 вăкăрпа ĕçлеççĕ. «Победа» колхозра (председателĕ Осипова юлташ) колхозниксен ĕнисемпе те усă кураççĕ. Палтиелĕнчи «Красная звезда» колхозра та колхозăн тата колхозниксен майракаллă шултăра выльăхсемпе ăнăçлă ĕçлеççĕ. «Динамо» колхозра комсомолецсем ĕне-вăкăрсемпе ыраш акаççĕ. Рахманов юлташ икĕ вăкăрпа кунне пĕр гектара яхăн ыраш акать.

Пĕр кунта 8 ĕçкунĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарабай ялĕнчи «Агроном» колхозри колхозница Фекла Петровна Кузьмина юлташ, тырпула пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатас шутпа, хăйĕн вăкăрĕпе ĕçлет. Вăл кĕлте турттарать тата хатĕрлев пунктне 18—20 пăтшар тиесе тырă леçет. Çапла вара вăл хăйĕн вăкăрĕпе ĕçлесе нормăна ирттерсе тултарать, кашни кунах 8-шар ĕçкунĕ ĕçлесе илет.

Малта пыракан бригада

Йĕпреç районĕнчи «Красный металлист» колхозра В. Лазарев юлташ ертсе пыракан 3-мĕш бригада кăçал аван ĕçлет. Унăн бригадинче ĕç дисциплини лайăх, пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа тăваççĕ. Çавна пула ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. А. Пудовкина, Е. Краснова, А. Воинова, П. Маркиянова, М. Казакова колхозницăсем тырă вырнă çĕрте кашни кунах хăйсен нормине 250—300 процент тултараççĕ. Вĕсем кунне 0,30—0,35 гектар тырă çулаççĕ. Колхозри ытти бригадăсем çак бригадăран вĕренме пултараççĕ.

А. АНИСИМОВ.

Элĕксем çаплипех шутлаççĕ...

Элĕк районĕ тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕç пуçланнăранпа ĕнтĕ республикăра тăтăшах 15—20-мĕш вырăн йышăнса тăрать. Кĕрхи тырăсене акассипе те район малти ретре теме çук. Августăн 29-мĕшĕ тĕлне кунта плана 65 процент ытла пурнăçланă, 8 колхоз ыраш акса пĕтернĕ.

Анчах та районра юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Уйрăмах район центрĕнчи «Большевик» колхоз (председателĕ В. Быков юлташ) юлса пырать. Çак колхоз юлса пыни туртăм вăйĕ çителĕксĕррипчен килет. Район руководителĕсем «Большевик» колхоз мĕншĕн юлса пынине пĕлеççĕ, анчах та ăна пулăшас тесе нимĕн те тумаççĕ. Лайăх шутласа пăхсан, колхоза практикăллă пулăшу пама та пулать иккен. Район центрĕнчи учрежденисен 21 лаша пур, вĕсем час-часах кунĕ-кунĕпе пушă тăраççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçе вара районри учрежденисенчен 4 лаша тата 30 çын кăна мобилизациленĕ.

ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсен территорийĕнче пурăнакан пур çынсене те тырпул пухса кĕртес ĕçе обязательнăй йĕркепе явăçтарма хушаççĕ.

Элĕк районĕнчи руководительсен çак постановление пурнăçласшăн лайăхрах ĕçлемелле.

Парти пурнăçĕ

Парти ретне ӳстерес ĕç çителĕксĕр пырать

Парти ретне çĕнĕ членсем илесси тата вĕсемпе ĕçлесси парти организацисен куллен тумалли ĕçĕ пулса тăрать. Çак задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе Шăхасан районĕнчи парти организацийĕсем пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. 1945-мĕш çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне парти членне районĕпе 25 çынна, кандидата 26 çынна илнĕ. Парти йышне ӳстерес тĕлĕшпе уйрăмăнах машинно-тракторнăй станцири пуçламĕш парторганизаци лайăх ĕçлет. Кунта çак вăхăт хушшинче 2 çынна парти членне, 4 çынна парти кандидатне илнĕ.

Анчах парти йышне ӳстерес ĕç, пĕтĕмĕшпе илсен, районра çителĕксĕр пулса пырать. Районри промкомбинатри партин пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Платонов юлташ) парти йышне ӳстерес тата коммунистсен политикăллă пĕлĕвне çĕклес тĕлĕшпе вуçех те ĕçлемест. Ку организацире 1945-мĕш çул хушшинче пĕр çынна та парти ретне илмен. Çавăн пекех райсовет исполкомĕнчи, уполнаркомзаг кантурĕнчи, райпотребсоюзри, вăтам шкулти тата ытти хăшпĕр организацисенчи парторганизацисем те парти ретне çĕнĕ членсем илес енĕпе чăтма çук япăх ĕçлеççĕ. Асăннă парторганизацисенче коммунистсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес ĕç те тивĕçлĕ вырăнта мар.

Парти ретне çĕнĕ членсем илесси колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисемпе территориальнăй пуçламĕш организацисенче те кирлĕ пек пулса пымасть.

Çакă вăл пĕтĕмпех парторганизацисем ĕççыннисем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пынинчен, актива кулленхи обществăллă ĕçе тивĕçлипе явăçтарманнинчен килет.

Ильич, Куйбышев тата Киров ячĕсемпе тăракан, «Пионер», «Гвардеец» колхозсем районра пур ĕçсемпе те малта пыраççĕ. Анчах та ку колхозсенчи пуçламĕш организацисем малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсене, ĕçри стахановецсене парти ретне илес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ.

Н. МИХАЙЛОВ.

Канашри вагонсем юсакан завод 10 çул тултарать

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче Канашри вагонсем юсакан завод ĕçлеме тытăннăранпа 10 çул тултарать. Çак 10 çул хушшинче завод Тăван çĕршывăн чугун çул транспортне аталантарас тата Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Уйрăмăнах завод Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тухăçлă ĕçлерĕ. Вăл тăшмана аркатса тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çара кулленех пулăшу парса тăчĕ. Çак 10 çул хушшинче завод коллективĕ Аслă Совет державине 263 миллион тенкĕлĕх продукци туса панă, 27.652 вагон юсаса панă; Государство заданийĕсене ирттерсе тултарнăшăн завод коллективĕ темиçе хутчен те Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. Лайăх ĕçленине пула завод коллективĕ 5 уйăх хушши ĕнтĕ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тытса тăрать.

Завод коллективĕ хăйĕн пĕрремĕш чаплă юбилейне кĕтсе илме тимлĕн хатĕрленет. Пур цехсенче те социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайнă. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче завод клубĕнче чаплă лару пулать.

О. АЛТУНИН.

Совет Союзĕпе Венгри экономика тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тата пĕр-пĕрне таварсем парасси çинчен тунă килĕшӳсене алă пусни

Кăçалхи августăн 27-мĕшĕнче Мускавра Совет Союзĕпе Венгри экономика тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси тата пĕр-пĕрне таварсем парасси çинчен тунă килĕшӳсене алă пуснă.

Пĕр-пĕрне таварсем парасси çинчен тунă килĕшӳре 1945-мĕш çулхи сентябрьтен пуçласа 1946-мĕш çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен Венгрие совет таварĕсене, Совет Союзне Венгри таварĕсене пĕтĕмпе 30 миллион долларлăх тăратасси çинчен каланă.

Çавăн пекех килĕшӳре пĕр-пĕрне тĕрлĕрен таварсем тăратассисĕр пуçне, Венгрири предприятисенче Совет Союзĕ валли совет çĕрмамăкĕнчен çип тата пир-авăр тăвасси çинчен каланă.

Килĕшӳве çаксем алă пуснă: Совет Союзĕ енчен—СССР Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ А. И. Микоян, Венгри енчен—Суту-илӳ тата Çулйĕрпе Çыхăну министрĕ Э. Герэ господин тата Промышленность министрĕ А. Бан господин.

(ТАСС).

МЕКСИКО ХУЛИНЧЕ ИСПАНИ РЕСПУБЛИКИН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУСА ХУНĂ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Мексикăран пĕлтернĕ тăрăх, Испани премьер-министрĕ Хираль Испани республикин эмиграцири правительствине туса хунă. Унта çаксем кĕнĕ: Испанири «Пĕтĕмĕшле рабочи союзĕн» лидерĕ Идалесио Присто, социалистсен партийĕн членĕ де Лосвиос, республиканецсен çĕнĕ партийĕн членĕ Альваро Альборнос, çавăн пекех тата Аугусто Барсиа, Осорио Гальярдо, Луис Хулимес де Асуа (Буэнос-Айресран), «Республика союзĕн» членĕ Торео Кампанья (Парижран), баск националисчĕсен лидерĕ Мануэль Ирухо (Лондонран), Каталонири сулахай партин членĕ Хосе Тараделбас (Парижран). Правительствăн вуннăмĕш членĕ «ĕçĕн наци федерацийĕн» представителĕ пулать. Премьер кама мĕнле вырăна лартасси çинчен каламан.

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Хираль паян пичетлесе кăларнă заявленире çапла каланă: вице-премьерпа ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма эпĕ Негрин доктора сĕнтĕм. Негрин çĕнĕ правительствăра çав вырăна ларма килĕшмерĕ. Коммунистсем те çĕнĕ правительствăна кĕме килĕшмен, вĕсем эпир Негрин правительствине кăна пулăшма пултаратпăр, тенĕ.

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Альфонсо Маури пĕлтернĕ тăрăх, Мексико хулинче Испани республикин Хираль ертсе пыракан çĕнĕ правительствине Негрин докторпа коммунистсене хутшăнтармасăр туни çинчен пĕлтерни Лондонри Испани республиканецĕсене питĕ тĕлĕнтернĕ. Вĕсем министрсен спискĕнче Негрин доктор та пулĕ тесе шутланă, мĕншĕн тесен юлашки темиçе эрне хушшинче Негрин политикăллă ĕçсене пĕрлештерсе йĕркелесе тăнă.

ДЕ ГОЛЛЬ КАНАДĂНА ÇИТНĔ

ПАРИЖ, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль ĕнер Оттавăна çитнĕ. Вăл Канада премьер-министрĕпе Маккензи Кингпа тĕл пулса калаçать, унтан вара Франци посольствинче Канада правительствин членĕсене йышăнать.

«Де Голльпа Кинг нимĕнле политикăллă ыйту çинчен те калаçмассĕ, мĕншĕн тесен Францирпе Канада хушшинче нимĕнле тавлашуллă ыйту та çук», тесе пĕлтерет агентство.

ПОРТО-РИКО СЕНАЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЕ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Порто-Рико сеначĕн председателĕ Муньес Майн çапла каланă: Порто-Рико никама пăхăнман çĕршыв пулмалла-и, доминион пулмалла-и, е США-н 49-мĕш штачĕ пулмалла-и?—çакăн çинчен халăхран ыйтса пĕлес ĕçе организацилеме çитес 15—18 кун хушшинче тăтăклă ĕçсем тăвăпăр, тенĕ.

КВИСЛИНГА МАЛАЛЛА СУД ТĂВАССИНЕ ТЕПĔР СРОКА ХĂВАРНĂ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Квислинга малалла суд тăвассине августăн 29-мĕш кунĕччен хăварнă, мĕншĕн тесен, медицина экспертизи каланă тăрăх, Квислинг «сывах мар».

ХОРТИЕ АНГЛИЕ АСАТНĂ

БЕЛГРАД, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, венгерсен «А Мадьяр Немзед» хаçатĕнче çапла çырнă: Венгрин регенчĕ пулнă Хорти Миклоша вăрçă преступникĕ вырăнне шутласа Англие ăсатнă. Унăн ывăлĕ—Хорти Миклош тата Венгрин премьер-министрĕ пулнă Каллаи Капри утравĕнче акăлчансен аллинче пурăнаççĕ.

ГРЕЦИ СУТĂНЧĂКНЕ ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ТУНĂ ПРИГОВОРА ПĂРАХĂÇА КĂЛАРНИ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Грецин пуканелле «правительствин» пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Георг Чолакоглу генерала май уйăхĕнче вĕлермелле приговор йышăннă пулнă; Грецин верховнăй апелляци сучĕ, çав приговора пăрахăçа кăларса, Чолакоглуна вĕлерес вырăнне виличченех тĕрмере усрамалла тунă. Çав судăн решенине регентăн Дамаскинос архиепископăн çирĕплетмелле. Чолакоглуна вĕлермелле тунă трибунал хăйĕн постановленийĕнче çав приговора çемçетме сĕннĕ пулнă.

ИРАНРИ ХАÇАТСЕМ СОВЕТ ВРАЧĔСЕМ НАЗВИН ХАЛĂХНЕ ПУЛĂШНИ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ТЕГЕРАН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Ферман» хаçатра советăн çар врачĕсем Казвин халăхне медицина тĕлĕшĕнчен пулăшу пани çинчен статья пичетлесе кăларнă. Сакăр уйăх хушшинче çар поликлиники 8.241 çынна пулăшу панă. Çав вăхăтра поликлиникăна трахомпа чирлекенсем 2.759 çын пынă, вĕсене пурне те операци туса сыватнă. Врачсем Шахристанра пурăнакан çынсене те васкавлă пулăшу параççĕ, тесе çырнă хаçатра.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ЯПОНИ ÇĔРĔ ÇИНЕ АННĂ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Макартур генералăн пĕлтерĕвне парать. Вăл пĕлтерӳре çапла каланă: Америкăн оккупациллĕ çарĕсен пĕр пайĕ паян ирхине Токио хулинчен 30 километр кăнтăртарахра ларакан аэродром çине вĕçсе пырса аннă. Вĕсем 48 транспорт самолечĕпе вĕçсе пынă. Çав çарсем Макартур генерала йышăнма аэродром хатĕрлеççĕ. Макартур унта кĕçнерникун пымалла. Союзниксен флотĕнчи корреспондентсем çапла пĕлтереççĕ: паян ирхине союзниксен малта пыракан флотилийĕ Токио бухтине кĕнĕ. Çав флотили хыççăн унта Британипе Америкăн 100 çар карапĕ ытла тата союзниксен оккупациллĕ çарĕсене илсе пыракан транспорт суднисем пырса кĕрĕç. Тинĕс пехоти Токио бухти çывăхĕнчи утравсем çине пырса аннă.

Корреспондентсем пĕлтернĕ тăрăх, Макартур генералăн ставки Токио хулинче император дворецне вырнаçать.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 29-мĕшĕнче Япони вăхăтĕпе ирхине 7 сехет те 8 минутра Америка линкорĕ «Миссури» Токио заливне кĕнĕ, çав линкор çинче Хэлси адмирал пырать. «Миссури» линкор çинче Япони парăнни çинчен калакан акта алă пусаççĕ.

АМЕРИКА ÇАРНЕ МАЛАШНЕ ÇЫНСЕМ ИЛСЕ ТĂРАССИ ÇИНЧЕН ТРУМЭН ЯНĂ ÇЫРУ

ВАШИНГТОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Конгресăн хăшпĕр членĕсем çынсене çара илме часрах чарăнма сĕннине хирĕç Трумэн сенатпа представительсен палатин çар комиссийĕсен председателĕсем патне янă çырура çапла каланă: 18 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ арçынсене малашне те çара илмелле. Çара илме пăрахма сĕнме май пулсан, лайăх пулнă пулĕччĕ. Анчах та эпĕ халь ун пек тума сĕнме пултараймастăп, мĕншĕн тесен тĕнчери условисем Пĕрлешӳллĕ Штатсене мир тăвиччен тапхăрта чылай пысăк çар тытса тăма хушĕç.

Трумэн çырăвĕнче тата çапла каланă: çар министерствин даннăйĕсем тăрăх, килес çулхи июль уйăхĕ тĕлне добровольцсен хисепĕ 300.000 çын пулĕ. Çынсене çара хальхи чухлĕ илсе пырсан, çав вăхăтчен çара 500.000 çын илĕç. Трумэн çапла çырать: «Сакă паллă: килес çулхи июльчен мĕнпур ĕçсене тивĕçтерме 800.000 çын çитмест. Эйзенхауэрпа Макартур генералсем каланă тăрăх, вĕсене хăйсене кăна 1.200 пин çын кирлĕ, ку шута ытти районсенчи Америка çарĕсене çирĕплетме кирлĕ çарсем кĕмеççĕ».

КĔСКЕН

* Америка флочĕн командующийĕн заместителĕ Эдвардс адмирал радиопа çапла каланă: вăрçă хыççăн США флотĕнче 300 ытла пысăк çар карапĕ пулать, флотра мĕн пурĕ 560 пин офицерпа рядовой пулать, тенĕ.

* Перепись бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, США-ра хальхи вăхăтра 139.682.000 çын пурăнать, урăхла каласан, халăх хисепĕ унта 1940 çултан пуçласа 8 миллион çын ытла ӳснĕ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Ф. А. Климов юлташа Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулма уйăрса лартнă.

АНРИ БАРБЮС

(Вилни 10 çул тултарнă май)

«Вăрçа курмасăр унăн хăрушлăхне сăнласа пама çук. Çавăнпа та ыттисен çак хăрушă опыта курмалла ан пулччăр тесе, пирĕн хамăрăн вăй çитнине пурне те тумалла». Çапла çырнă Барбюс 1915 çулта фронтран. Çакă ĕнтĕ унăн пĕтĕм кĕнекисен, мĕнпур пурнăçĕн никĕсĕ пулса тăнă. Барбюс çулăмлă публицист, ăста художник, пултаруллă организатор пулнă. Вăл империализм вăрçине хирĕç, фашизма хирĕç, пур тĕрлĕ реакцие тата унăн террорне хирĕç ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ.

Çак кĕрешӳре Барбюс 20 çул хушши пулнă. Унăн паттăр та уçăмлă сасси пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче янрама тытăннă. Çакă ĕнтĕ вăрçăра вутпа пиçсе çирĕпленнĕ халăх массисен сассийĕ пулнă. Вăрçă вăл хăрушлăх, асаплăх кăна мар, вăл халăхсене çитĕнтермелли шкул та пулса тăрать. Барбюс произведенийĕн страницисенче шăпах ĕнтĕ çак шухăша вуласа пĕлме пулать, ăна вăл хăйĕн мĕнпур пурнăçĕпе кăтартса панă.

1914 çулта вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Барбюс фронта рядовой салтак пулса кайнă. Вăрçă вăхăтĕнче вăл яланах простой салтаксемпе пĕрле пулнă. Вĕсене вăл «çапăçу пролетарийĕсем» тесе ят панă. Вĕсемпе пĕрле вăл вăрçăпа окопри пурнăçăн мĕнпур йывăрлăхне, «тăпрапа пылчăкăн хăрушлăхне», тамăкри пек вут-хĕме чăтса ирттернĕ. Писатель вараланчăк шинель тăхăннă çынсенчен уйрăлман, вăл çав çынсенче паттăрлăх тата этемлĕхĕн шухăш-кăмăлне курнă.

Барбюс хастарлăн кĕрешнĕ, мĕншĕн тесен вăл чи сĕмсĕр империализма—нимĕç империализмне хирĕç кĕрешнине пĕлнĕ. Вăл халăхсем çак хăрушă вăрçăн опытне пурăнса ирттерсе, унăн тĕрĕслевĕсенче çирĕпленсе çак хăрушлăха урăх пулмалла мар тума пултарнине тата ăна тума кирлине ытларах та ытларах ăнен-се пынă. Çапла унăн пĕтĕм тĕнчипе паллă «Вут-хĕм» ятлă кĕнекин шухăшĕ çуралнă. Çак кĕнекене вăл «пĕр взводăн дневникĕ» пек туса çырнă. Хăйĕн кĕнекинче вăл салтак массисем, рядовой боецсем вăрçă çине мĕнле пăхнине нимĕн улăштармасăр питĕ тĕрĕс кăтартса панă. Анчах та «Вут-хĕм» произведенин историллĕ шухăшĕ урăхла пулнă. Барбюс хăй кĕнекен пĕлтерĕшĕ унăн материалĕнче мар, унта каласа панă хаяр чăнлăх вулакана тивĕçлĕ выводсем тутарнинче пулать тесе шутланă. Барбюсăн «Вут-хĕм» тата каярахпа «Çутă» кĕнекисенче Ленин вăрçă асаплăхĕнче питĕ пысăк опыт илсе çирĕпленнĕ миллионлă массăсен ăс-тăнĕнчи революциллĕ ăнланулăхĕ ӳснине курнă.

«Вут-хĕм» çав тери паллă произведени пулса тăнă. Цензура кĕнекен текстне йăвашлатма тăрăшнă пулин те, вăл вулаканăн чĕрине кĕрсе вырнаçмалли тӳрĕ çула тупнă. Вăл урăх вăрçăсене пуçланма памалла мар тесе чĕнни, вăрçă пуçлакансене тĕрĕс кăтартса пани фронтовиксене çав тери килĕшнĕ. Барбюс кĕнеки вĕсен кун-çулне сăнласа панă. Унăн кĕнеки вĕсен ăс-тăнĕнчи шухăшĕсене ăнлантарса панă. Вăл вĕсен шухăшне йĕркелесе çирĕплетнĕ, çав шухăшсене окопсенчен илсе тухса халăх хушшине сарнă.

1917 çулта Барбюс фронтра чухне Францири пĕр тĕттĕм ялти çамрăк учительницăран çыру илнĕ. Вăл çапла çырнă: «Вут-хĕм» кĕнеке манăн вăрçа пула таталнă ĕмĕтсене, çав тери пысăк хуйха чăтса ирттерме пулăшрĕ. Анчах та çак катастрофа малашнехи телейлĕ пуласлăхăн пуçламĕшĕ пулнине ăнланса илсен, манăн çĕнĕрен вăй хутшăнчĕ. Апла пулсан, — тесе çырнă учительница, — вăрçăра тунă жертвăсем усăсăр пулман. Барбюсăн аслă вăйĕ шăпах çаканта пулнă ĕнтĕ. Унăн хаяр та çирĕп сасси фронт тамăкĕ варринчен, вут-хĕм ăшĕнчен тухса янăраса тăнă. Вăл миллионшар çынна асаплăха чăтса ирттерме пулăшнă, вĕсене пуласлăхăн çулне кăтартса панă. «Вăрçă инкекне аса илнĕ май салхуланса ларма кирлĕ мар, çав инкеке малашне пулмалла мар тăвас тесе, социальнăй условисене лайăхлатас тесе, уппа усă курмалла, — тенĕ Барбюс.

Халĕ ĕнтĕ çак сăмахсенчен нимĕн те тĕлĕнмелли те çук. Анчах та Барбюс вăл çакна тулли сасăпа пĕтĕм тĕнчене каласа панă хĕвеланăçĕнчи чи малтанхи писатель пулнине манма кирлĕ мар.

Тепĕр темиçе çултан, хĕвеланăçĕнче çĕнĕ вăрçă пуçланас хăрушлăх çав тери уçăмлăн сисĕнме пуçласан, хĕвеланăçĕнчи нумай писательсем 1914—18 çулсенчи хăрушлăхсене сăнласа пама тытăнчĕç. Çак картинăсемпе вĕсем пулас вăрçăн хăрушлăхне сирсе яма шутларĕç. Анчах та вĕсенчен нумайĕшĕ асаплăха сăнласа панинчен малалла каяйман. Вĕсен кĕнекисем этемĕн анаш ӳт-пĕвне вăрçă машини мĕнле лутăркаса тăкнине, унăн ăс-тăнĕ мĕнле пушанса юлнине çеç сăнласа панă. Çакăн çинчен Ремарк хăйĕн «Хĕвеланăçĕнче улшăнусăр» ятлă паллă кĕнекинче çырнă, ун çинченех акăлчан писателĕ Эндингтон хăйĕн «Герой вилĕмĕ» кĕнекинче тата американец Хемингуэй хăйĕн «Сывпул хĕçпăшал» романĕнче каласа панă. Вĕсен кĕнекисем—вăйлă произведенисем, анчах та вĕсем Барбюсăн «Вут-хĕм» кĕнекинчен нумай уйрăм тăраççĕ. Вĕсем уйрăм çын асапланнине сăнласа панă. Барбюс халăх массисен кун-çулĕ çинчен каланă. Вĕсене вăрçă шухăш-кăмăл енчен тĕллевсĕр туса хăварнă, вĕсем хăйсем те, вĕсен геройĕсем те вăрçăран ывăнса, чăлахланса, тĕллевсемпе ĕмĕтсене çухатса тухнă. Барбюс çирĕп шухăш-кăмăллă çынсен сисĕмĕсене, вăрçăран вăйсăрланса мар, тата ытларах çирĕпленсе тухнă çынсене, «вут-хĕм» витĕр тухнă хыççăн та шухăш-кăмăла пусăрăнтарман, пачах урăхла, уçăмлă шухăш-кăмăл илнĕ çынсене сăнласа панă. Барбюс вăрçă инкекне курнине пула ĕçлеме хавхаланакан халăхăн шухăш-кăмăлĕсене каласа панă. Çапăçма пултаракан пĕтĕм вăя пухасси, халăхсен ирĕкĕшĕн, чăн-чăн пурнăçшăн кĕрешме пултаракан мĕнпур çынсен хавхаланăвне, пĕтĕçтерессн—Барбюс пуçĕнче çак шухăш яланах пуçпулса тăнă.

Фронтра чухнех, 1917 çулта, Раймонд Лефевр тата Поль Вайян Кутюрье писательсемпе тĕл пулнă чухне унăн малта пыракан интеллигентсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвне тăвас шухăш çуралнă. Ун чухнех Барбюс çав пĕрлешĕвĕн манифестне палăртса хунă. 1919 çулта ку организацие туса ăна «Клартэ» ят панă, урăхла каласан, вăл уçăмлăх, çутă тенине пĕлтерет. «Клартэ» организацин задачи—уçăмлăх парасси, çула çутатса парасси пулнă. Вăл империализм вăрçине хирĕç кĕрешес тата вырăссен çамрăк республикине хӳтĕлес лозунгсене кăларса тăратнă. «Клартэ» организацие Анатоль Франс, Ромен Роллан, Дюамель, Ж. Р. Блок, Францири тата тĕрлĕ çĕршывсенчи ытти паллă писательсем те кĕнĕ. Барбюс вăрçăра пулнă çынсен сарлака организацийĕсене тăваканĕ пулнă. Вăл витĕмлĕ статьясем çыракан публицист, паллă политика деятелĕ пулса тăнă. Унăн «Кĕрешӳсĕн сăмахĕсем» ятлă кĕнекене пухса пичетленĕ статьисем реакцие пур енчен те тăрă шыв çине кăларса пыраççĕ.

Писателĕн мĕнпур творчестви витĕр пĕр шухăш—этемлĕх асаплăхне пĕтерессн, этеме этем пусмăрласа пурăнассине пĕтересси уйрăмах паларса тăрать. Хăйĕн малтанхи кĕнекисенчех тата «Тамăк» ятлă романĕнче этемĕн асапне вăл питĕ витĕмлĕ сăнласа панă. Фронта, вăрçа пула вăл çак тема çине татах та тарăнрах пăха пуçланă. Çынăн асаплăхĕ вăл ĕмĕре пыракан япала мар, ăна çынсем хăйсемех тунă. Этемлĕх историйĕ пĕрисем теприсене вăйпа пусмăрланине ытларахăшĕсем сахалрахăшĕсене пусмăрланине темĕн чухлĕ те кăтартса парать. Барбюсăн «Сыпăксем» ятлă кĕнекинче çак шухăша çутатса панă. Çак кĕнекере историн иртнĕ тапхăрĕсем—авалхи Египетпа Римран пуçласа XX-мĕш ĕмĕре çитиччченех—пусмăрлăхăн хăрушă сăнчăрĕн уйрăм сыпăкĕсем пек пулса тăраççĕ. Мĕнпур истори, тесе çырнă автор, пусмăрлăхăн тĕрлĕ формисене улăштарни çеç пулса тăрать. Халĕ ĕнтĕ халăхсен çакна улăштармалла, вĕсем ăна улăштарма пултараççĕ те. Каярахпа Барбюс хăйĕн «Вĕçев» ятлă кĕнекинче çак тема патне татах таврăннă. Кунта вăл ăна истори енчен мар, географи енчен илсе каласа парать. Произведени геройĕ самолетпа çӳле вĕçсе хăпарса тĕрлĕ материк çинче этемлĕх пурăнса ирттернĕ цивилизацин тĕрлĕ енĕсене курать. Пур çĕрте те хуçасем чурасене пусмăрланин юнĕпе тасамарлăхĕ, хăрушлăхпа асаплăхĕ. Анчах та автор пусмăрлăх пуçпулса тăрасси ĕмĕрлĕхе пыманнине, вăл пурĕ пĕрех пĕтсе ларнине палăртса хăварать. Барбюс хăйĕн мĕнпур ĕмĕрĕ тăршшĕнче пусмăрлăха çакăн пек революциллĕ курайманнине тӳрре кăларасшăн кĕрешнĕ. 1923 çулта вăл Францири коммунистсен парти членне кĕнĕ. Вăл Европăра нумай çӳренĕ, Балканри террора тăрă шыв çине кăларакан пуян материал пухнă. Çак материалпа вăл каярахпа хăйĕн «Палачсем» ятлă кĕнекинче усă курса реакцин «çăварлăхсăрланнă варварствине» питленĕ. Барбюс фактсене кăтартса пама тăрăшнă. Вăл çав тери палăрмалла тĕслĕхсене пухса вĕсене уçăмлăн сăнласа панă. Çакăн пек вăл «Тĕрĕс повеçсене» çырнă. «Палачсем» кĕнекере Барбюс вăтам ĕмĕрсенчи пек асаплантарнине, тĕрмесене лекнĕ çынсене хĕрхенӳсĕр нуша кăтартнине, фашистла бандăсен çитĕнсе пыракан сĕмсĕрлĕхĕ усă куракан халăхсене пĕтермелли вăйла организацисене, палачсем хĕрарăмсемпе ача-пăчасене тискеррĕн вĕлернине, çырса кăтартнă. Çак страницăсене паян, пĕтĕм тĕнчене çавăрса илме хăтланнă гитлерла вăрă-хурахсен тискер ĕçĕсем асран каймалан вăхăтра çырнă пекех тупăнаççĕ.

Сахалрахăшĕ нумайрахăшне пăхăнтарса тăрасси пуçпулнине хирĕç Барбюс çакăн пек пусмăрлăха пĕтерни çĕршыва кăларса тăратнă. Совет Российĕ уншăн пуласлăхăн пур лайăх енĕсене те пĕтĕçтернĕ çĕршыв пулса тăнă. Çамрăк совет республикине хӳтĕлес шутпа каланă малтанхи сăмахĕсенчен пуçласа хăйĕн ĕмĕрĕн юлашки кунне çитиччченех Барбюс çĕнĕ Российйăн сăнарне питĕ çӳле çĕкленĕ. Унăн «Сталин» ятлă кĕнеки хĕвеланăçшăн уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăнă. Çакă вăл сулпуçăн кун-çулне илемлĕн сăнласа пани, Сталин юлташăн пурнăçне партин тата вырăс революцийĕн мĕнпур историйĕпе çыхăнтараканскер, çав тери паллă кĕнеке пулса тăнă. Хăйĕн ĕмĕрĕн юлашки çулĕсенче Барбюс Ленин çинчен кĕнеке çырма тытăннă. анчах вилĕм унăн ĕçне татнă.

* * *

Тĕнчене улăштарас тесе тата вăрçăсене ĕмĕрлĕхех пĕтерес тесе кĕрешнĕ Анри Барбюсăн творчестви хальхи вăхăтра, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем сĕмсĕр фашизма хирĕç пынă хаяр вăрçăра хăйсен патриотизмла сисĕмĕсен мĕнпур вăй-хăватне, тĕрĕс ĕçшĕн пыракан кĕрешӳре пĕрлĕх мĕнле вырăн йышăнса тăнин мĕнпур вăйне кăтартса панă вăхăтра уйрăм пĕлтерĕш илет.

Миллионшар çынсен ăс-тăнне пуласлăхăн сарлака та хăватлă çутипе çутатма тăрăшнă французсен паллă писателĕн кĕнекисем этемлĕхĕн чи лайăх идейисен ячĕпе паттăр ĕçсем тумашкăн нумай çулсем хушши хавхалантарса пырĕç.

Е. ГАЛЬПЕРИНА,
Филологи наукисен кандидачĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—[illegible] 89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин [illegible]

НТ 00235 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ [illegible]